# «МАТТУР АЧА, ЯШ АЧА»

*Шупашкарти 1-мӗш гимназире иртнӗ  конкурс сценарийӗ*

(Конкурс илемлӗ ташӑран пуҫланать. 4А класс ачисем)

**Вика:** Ырӑ кун пултӑр, хаклӑ хӑнасем, вӗрентекенсем тата ачасем!

**Вӗрентекен:** Салам пурне те! Сире паян ҫак ҫутӑ та хӑтлӑ залра курма ҫав тери хавас!

**Вика:** Эпир «Маттур ача, яш ача» конкурса пуҫлатпӑр. Каччӑсем, вӑтанса ан тӑрӑр, сцена ҫине тухӑр!

(«Богатырская наша сила» илемлӗ кӗвӗ янӑрать)

**Вика:** 1-мӗш номерлӗ каччӑ Арсений Шаков, Шупашкарти 49-мӗш шкулта, 5-мӗш класра вӗренекен.

**Вӗрентекен:** Вика, пӑх-ха, мӗнле маттур, яш ача! Чӑн-чӑн чӑваш каччи!

**Вика:** Чӑнах та, маттур. Маттур кӑна мар паттӑр та пулӗ-ха. Курӑпӑр. Иккӗмӗш номерлӗ каччӑна чӗнетпӗр – Артур Лысов, Шупашкарти 54-мӗш шкулта, 4-мӗш класра вӗренекен.

**Вӗрентекен:** Виҫҫӗмӗш номерлӗ каччӑ  пирӗн конкурсра чи кӗҫӗнни. Шупашкарти 2-мӗш гимназире, 3-мӗш класра вӗренекен Костя Афаньев. Кӗтсе илӗр!

**Вика:** Тӑваттӑмӗш номерлӗ каччӑ Шупашкарти 4-мӗш гимназире, 5-мӗш класра вӗренекен Ваня Архипов. Алӑ ҫупатпӑр!

**Вӗрентекен:** Пиллӗкмӗш номерлӗ каччӑ  вара пирӗн гимназире 5-мӗш класра тӑрӑшса вӗренекен Юра Назаров!

**Вӗрентекен:** Улттӑмӗш  номерлӗ каччӑ  те пур пирӗн. Вӑл татах пирӗн гимназире 4-мӗш класра вӗренекен Рома Иванов! Пӑхӑр-ха, ачасем, епле маттур та патвар каччӑсем килнӗ пирӗн пата.

**Вика:** Чаплӑ, чаплӑ. Пуҫ ҫаврӑнсах кайрӗ. Наталья Васильевна, сире хӑш каччи ытларах килӗшет?

**Вӗрентекен:** Пуҫна ҫавӑрттарса ан тӑр-ха, Вика! Жюрипе паллаштар пире!

**Вика:** Юрĕ. Конкурса хутшăнакан каччăсене хаклама пире сумлă жюри пулăшать. Жюри председателĕ – республикăра тухса тăракан «Асамат&Шевле» журнал редакторĕ Николаев Владислав Дмитриевич.

**Вĕрентекен:** Çавăн пекех жюрире Лидия Евсеевна Константинова-Малина – чăваш эстрада артисчĕ, «Нарспи» клуб ертÿçи пулать. Унсăр пуçне тата Анатолий Николаевич Головинский – художник, пирĕн гимназири ИЗО тата технологи вĕрентекенĕ, Елена Варсоновьевна Николаева – 1-мĕш гимназири аслă вожатăй пирĕн каччăсене хаклакансем пулĕç.

**Вика:** Халĕ вара конкурсантсене ăнăçу сунса сцена çинчен ăсататпăр. Сире валли вара чăваш халăх юрри. Юрлаканĕ – *Лена Полутова.*

**Вика:**

Паллашас килет санпа,

Пĕлес килет сан ятна.

Хăш шкултан, хăш хуларан,

Мĕн тума эс пултаран?

**Вĕрентекен:** Паллашу **(1)** конкурсне пуçлатпăр. Сцена çине пĕрремĕш номерлĕ каччăна чĕнетпĕр: Шаков Арсений, Шупашкарти 49-мĕш шкул.

**Вика:** Лысов Артур, Шупашкарти 54-мĕш шкул.

**Вĕрентекен:** Афаньев Константин, Шупашкарти 2-мĕш гимнази.

**Вика:** Ваня Архипов, Шупашкарти 4-мĕш гимнази.

**Вĕрентекен:** Назаров Юра, Шупашкарти 1-мĕш гимнази.

**Вика:** Иванов Рома, Шупашкарти 1-мĕш гимнази.

**Вĕрентекен:** **(2)** Чăвашсен маттур каччисем мĕн авалтан, мĕн ĕлĕкрен питĕ ăслă та тавçаруллă пулнă. Айтăр-ха тĕреслесе пăхар пирĕн каччăсен тавçарулăхне. Ачасем! Сирĕн экран çинчи ыйтусене хуравламалла.

Сумлă жюри вара сирĕн хуравсене тимлĕ итлесе, хакласа пĕтĕмлетÿ тăвĕ.

(Экран çинчи ыйтусем çине хуравлаççĕ.)

**Вĕрентекен:** Ĕç çынна илем кÿрет.

**Вика:** Кайăк хитре тĕкĕпе, этем хитре ĕçĕпе, – теççĕ халăхра.

**Вĕрентекен:** Ĕç – пурнăç илемĕ.

**Вика:** Ӳркенмен ӑста пулнӑ тет.

**Вӗрентекен:** Ӗҫчен ҫынна пӗр сӑмах, кахал ҫынна ҫӗр сӑмах, – теҫҫӗ.

**Вика:** Кӑҫалхи ҫула пирӗн республикӑра «Ӗҫ ҫынни ҫулталӑкӗ» тесе палӑртнӑ. Кашни ача ӳссен мӗнле те пулин профессийе алла илме ӗмӗтленет.

Эпӗ ыйтрӑм Лёньӑран:
«Ӳссен эсӗ кам пулан?»
Лёня: «Летчик пулап, – тет, –
Самолётпа вӗҫеп», – тет.

Эпӗ ыйтрӑм Тольӑран:
«Ӳссен эсӗ кам пулан?»
Толя: «Тухтӑр пулап, – тет, –
Ҫын  чирлесен – чӗртеп», – тет.

Эпӗ ыйтрӑм Кольӑран:
«Ӳссен эсӗ кам пулан?»
Коля: «Конюх пулап, – тет, –
Лашасене пӑхап», – тет.

**Вӗрентекен:** Интереслӗ, кам пулма ӗмӗтленеҫҫӗ-ши пирӗн каччӑсем? Тӗрӗслесе пӑхар-и?

**Вика:** Тӗрӗслесе пӑхас. Ачасем сирӗн ҫак хутсенчен пӗрне суйласа илмелле. Хут ҫинче хӑш професси ятне ҫырнӑ, ҫав профессин тумтирне суйласа илсе тумланмалла. Тата хӑвӑр суйласа илнӗ професси ҫинчен таватӑ йӗркерен тӑракан сӑвва вуласа памалла.

(Ачасем, професси хатӗрӗсене суйласа илсе, хӑйсем ҫине тӑхӑнаҫҫӗ. Суйланӑ професси ҫинчен сӑвӑ йӗркисем вуласа параҫҫӗ.)

**Вӗрентекен: (3)** Маттурсем, ачасем. Ку вӑл пирӗн виҫҫӗмӗш «Чи ӑста ача» ятлӑ конкурсӑн пӗрремӗш пайӗ пулчӗ. Халӗ вара конкурса малалла тӑсатпӑр. Ачасем, халӗ эпир сирӗн ӑсталӑха тӗрӗслесшӗн.

Сире пӗрер папка валеҫсе парапӑр. Вӑл папкӑра тӗрлӗ тӗслӗ хут, картон, хачӑ тата ҫилӗм пур. Сирӗн пурин те ҫывхарса килекен Ҫӗнтерӳ уявӗ валли открытка тумалла. Сумлӑ жюри вара эсир тунӑ ӗҫе тивӗҫлӗ хаклӗ.

**Вика:** Эсир ӗҫленӗ вӑхӑтра вара пире, куракансене, 5Е класра вӗренекен Саша Егоров  хитре чӑваш кӗввисемпе савӑнтарать.

(Саша купӑспа чӑваш кӗввисем калать, ҫав вӑхӑтра Вика куракансене „Ма хитре-ши Шупашкар урамӗ?“ юрӑ сӑмахӗсене валеҫсе парать. Саша юррине юрлаттарать.)

**Вĕрентекен:** Ĕçсем хатĕр пулсассăн, вĕсене жюри сĕтелĕ çинĕ пырса хума ыйтатпăр.

**Вика: (4)** Халĕ вара тепĕр конкурс. Ку конкурсра эпир кам чи çивĕч ача (Кто самый ловкий) пулнине тĕрĕслĕпĕр. Сирĕнпе „Дартс" вăйă выльăпăр. Кам нумайрах тĕл перет, çавă çĕнтерӳçĕ пулать. Кашни ачан виçĕ хут пеме май пур.

(Каччăсем тĕл персе ăмăртаççĕ).

**Вĕрентекен:** Маттурсем эсир! Халĕ сире валли илемлĕ ташă. Ташлаканĕ – Трофимова Даша.

**Вика:** Каччăсем, халĕ вара эсир вĕрентекенсемпе мĕнле туслă пулнине пăхатпăр. Кам маларах сцена çине хăйĕн вĕрентекенне е урăх вĕрентекене чĕнсе тухать, çав пĕчĕк парне илет.

(Музыка янăрать. Каччăсем вĕрентекенсене сцена çине чĕнеççĕ).

**Вĕрентекен:**

Акă ĕнтĕ, пăх ĕнтĕ,

Калама та çук ĕнтĕ.

Сылтăм ура хĕрсе кайрĕ,

Чарăма та çук ĕнтĕ.

Вика, манăн хамăн ташлас килсе кайрĕ. Интереслĕ, пирĕн çак каччăсемпе вĕрентекенсем ташлама пултараççĕ-ши? Айтăр-ха, тĕрĕслесе пăхас. Саша, купăс каласа ташлаттарма пултаратăн-и, эсĕ?

**Саша:** Пултаратăп, паллах.

**Вĕрентекен:** Апла пулсан яра парар ташша. Саша купăс калать, эсир вара ташлатăр.

(Каччăсемпе вĕсен вĕрентекенĕсем купăс çеммипе ташлаççĕ).

**Вика:** Маттур, маттур, каччăсем. Маттур, вĕрентекенсем. Мĕнле савăнтартăр пире. Тавах сана, Саша. Сире пурне те пĕчĕк пылак парне.

(Канфетсем валеçсе парать).

**Вĕрентекен: (5)** Халĕ вара тепĕр конкурс. Паçăрах каларăмăр ĕнтĕ, чăваш каччисем чи маттурисем те чи ĕçченнисем тесе. Çапла вара эпир «Чи ĕçчен ача» конкурс ирттеретпĕр. Сире валли хăма татăкĕ, пăта тата мăлатук хатĕрленĕ. Мĕн тумалла-ши, сирĕн?

**Вика:** Тĕрĕс, пăта çапмалла. Çак хăма татăкĕсем çине кам маларах та тӳрĕрех пăтине çапса кĕртет, çав чи ĕçчен ача шутланĕ. Ăнăçу сире!

(Илемлĕ музыка янăрать. Каччăсем пăта çапаççĕ).

**Вĕрентекен:** Çурхи хĕвел таврана ăшшăн пăхнă чух, кайăксен юрри чуна тыткăнланă чух, пирĕн мĕншĕн юрлас мар, пирĕн мĕншĕн ташлас мар? – теççĕ каччăсем. Халĕ **(6)** «Чи пултарулла ача» конкурса пуçлатпăр.

**Вика:** Сцена çинче 4-мĕш гимнази каччине – Ваня Архипова, чĕнетпĕр. Кĕтсе илĕр!

2. Шаков Арсений, Шупашкарти 49-мĕш шкул.
3. Назаров Юра, Шупашкарти 1-мĕш гимнази.
4. Лысов Артур, Шупашкарти 54-мĕш шкул.
5. Афаньев Костя, Шупашкарти 2-мĕш гимнази.
6. Иванов Рома, Шупашкарти 1-мĕш гимнази.

**Вĕрентекен:** Чăваш халăхĕ ытти халăхсем пекех мĕн çут тĕнчене тухнăранпа пиншер çул хушши хăйĕн культрине пуянлатса пырать. Мĕн авалтан тухакан ăруран-ăрăва куçакан ал-ĕçне, йăли-йĕркине, халăх сăмахлăхне, пултарулăхне, юрри-ташшине çĕнетсе пырать.

Сирĕн умра 9-мĕш класра вĕренкен Андреева Настя „Çĕнĕ кун“ юрă юрлать.

**Вика:**: Маттур-и пирĕн каччăсем. Куракансем, эсир мĕнле шутлатăр. Сцена çине каччăсем тухаççĕ. Эсир вара вĕсене алă çупса кĕтсе илĕр.

(«Богатырская наша сила» илемлĕ кĕвĕ янăрать)

**Вĕрентекен:** Шаков Арсений, Шупашкарти 49-мĕш шкул.

**Вика:** Лысов Артур, Шупашкарти 54-мĕш шкул.

**Вĕрентекен:** Афаньев Костя, Шупашкарти 2-мĕш гимнази.

**Вика:** Ваня Архипов, Шупашкарти 4-мĕш гимнази.

**Вĕрентекен:** Назаров Юра, Шупашкарти 1-мĕш гимнази.

**Вика:** Иванов Рома, Шупашкарти 1-мĕш гимнази.

**Вика:** Çапла вара пирĕн конкурс вĕсленчĕ. Жюри пĕтĕмлетӳсем туса ĕлкĕрчĕ-и? Сире сăмах!